2023-2024-мĕш вĕренӳ çулĕ
Шкул шайĕнчи олимпиада
Чăваш чĕлхипе литератури (Чăваш шкулĕ)
11 класс
Ыйтусем

Олимпиада ирттермелли вăхăт – 150 минут
Кашни ыйтăва тĕрĕс хуравласан чи нумайййи 62 балл пухма пулать

1. Ют чĕлхерен çыру урлă йышăннă сăмахсен паллисене çырăр. Тĕрĕс хуравшăн – 4 балл.

2. Йăнăш тупăр та тӳрлетĕр:
*Акă, каçа ярмăнкка хыпарĕ пуçтарăнать, йыхрав хыпарĕсем çитеççĕ.* Тĕрĕс хуравшăн – 5 балл.

3. Предложенире йăнăш тупăр та тӳрлетĕр, сăлтавне ăнлантарса парăр:
*Ачан урисем шăннă.* Тĕрĕс хуравшăн – 6 балл.

4. Таса *сывлăш, çутă пайăрки, хĕвел хĕлхемĕ, асамлă каç, сиплĕ курăк.* Сăмах майлашăвĕсене вырăсла куçарăр. Тĕрĕс хуравшăн – 5 балл.

5. Фразеологизмсен пĕлтерĕшне ăнлантарăр:
*Пуçран тухмасть, пуçран шаккаса кала, пуçран кăларса ывăт, пуçа ан ус, пуçа хывăх тултарнă.* Пĕтĕмпе 10 балл илсе пулать.

6. «Хура çăкăр» романри авалхи чăваш ячĕсене çырса парăр. Хайлава кам çырнă? Ятсене çырнăшăн (пиллĕкрен кая мар) – 5 балл. Авторне палăртнăшăн – 2 балл. Пурĕ – 7 балл.

7. «Чун хавалĕпе те паттăр,
Чĕрепе те шел-кăвар –
Эпир пулнă, пур, пулатпăр!»
Çак йĕркесене хăш сăвăран илнĕ? Авторĕ кам? Тĕрĕс хуравшăн– 4 балл.

8. Чăваш театрĕпе киноне пуçарса яраканĕ кам шутланать? «Чăвашкино» студи миçемĕш çулта йĕркеленнĕ? Тĕрĕс хуравшăн– 6 балл.

9. Чăвашсен йăла уявĕсен ячĕсене çырса парăр. Тĕрĕс çырнăшăн – 5 балл.

10. «Чун хавалĕпе те паттăр,
Чĕрепе те шел-кăвар –
Эпир пулнă, пур, пулатпăр!»
Çак сăмахсемпе автор мĕн каласшăн пулнă? Хăвăр шухăшăра ĕнентерсе ăслав çырăр. Кӳртĕм сăмахсемпе усă курăр. Тулли хуравшăн – 10 балл.